

# Йывăҫ тымарĕпе ҫирĕп, этем – ҫемйипе

2024 Ҫемье ҫулталăкĕ

Проект Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕн, информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин пулăшăвĕпе пичетленет. Авторĕ – Ирина Яковлева

## Кĕтсе ил мана...

**Хурăнсур Ҫармăс Кăлĕнче пурăнакан Татьяна Григорьева нумай ача амăшĕ. Унăн мăшăрĕ ятарлă ҫар операцине хутшăнать. Вĕсен юратăвĕ хурҫăран та ҫирĕп пулни йывăрлăхсене ҫĕнтерет, чунра шанăҫ ҫуратса ырă шухăшсем парнелет.**

Татьяна 26 ҫулта. Шкул хыҫҫăн Шупашкарти медицина колледжĕнче «Сестринское дело» енĕпе пĕлӳ илнĕ, хĕрлĕ дипломпа вĕренсе пĕтернĕ.

Вăл чăнах та питĕ маттур пике. Ун ҫинчен тĕплĕнрех пĕлес тесе эпĕ салтак мăшăрĕпе калаҫма шутларăм.

**– Таня, салам. Эсир ҫемье ҫавăрнăранпа миҫе ҫул ҫитрĕ-ха? Пĕлнĕ тăрăх, санăн мăшăру халĕ Тăван ҫĕршыва хӳтĕлет. Кун пирки те каласа парсам.**

– Манăн мăшăра Николай Григорьев тесе чĕнеҫҫĕ. Вăл, чăнах та, ятарлă ҫар операцине хутшăнать, хамăрăн ҫĕршыва хӳтĕлет. Мăшăрпа 2016 ҫултанпа пĕрле, виҫĕ ача пăхса ӳстеретпĕр. Салтак пурнăҫĕпе эпир 2017 ҫултах паллашрăмăр. Аслă хĕрпĕрчине, Катюшăна, ҫуратнă вăхăтра вăл Ханты-Мансийск автономи округĕнче службăра тăратчĕ. 2020 ҫулта пирĕн иккĕмĕш ача ҫуралчĕ, ăна София ят хутăмăр. Тĕрĕссипе, эп кĕтме пĕлетĕп. Салтак аттине хывсан мăшăр Мускава ĕҫлеме ҫӳретчĕ, пĕр уйăхран кая мар унта пулнă, ялан ҫемьешĕн тăрăшнă.



Григорьевсем.

Ҫав вăхăтра эпĕ ачасене садике, кружоксене илсе ҫӳреттĕм, «Август» тата Йĕпреҫ паркĕсене те усăлма час-часах кайнă. Ҫуллахи вăхăтра пахчаҫимĕҫпе ĕҫлеме килĕштеретĕп, хĕлле валли тĕрлĕ заготовкăсем тума юрататăп. Ҫапла пурăннă май кĕтмен-ҫĕртен 2022 ҫулхи октябрьте тепĕр хут повестка пирĕн киле ҫитрĕ, хальхинче ман упăшкана вăрҫа – ҫĕршыва хӳтĕлеме – чĕнеҫҫĕ. Вăл ним хăрамасăр: «Каятăп, кĕтсе ил мана», – тесе ҫеҫ каларĕ. Ҫав хушăра эпир виҫҫĕмĕш хутчен атте анне пуласси пирки те пĕлтĕмĕр. 2023 ҫулхи февралĕн 23-мĕшĕнче упăшка патне Украинăна кăвак тĕс кăларакан огнетушитель чикнĕ посылка ятăм, ăна усса сирпĕтнĕ хыҫҫăн вăл ывăл ҫуралассине пĕлчĕ. Питĕ савăнăҫлă хыпар пулчĕ ку пуриншĕн те, упăшка чи телейли пулчĕ. Ҫапах вăрҫă хăйĕннех тăвать: нумай шутланипе, те кулянипе пепке 7 уйăхранах кун ҫути курчĕ. Тавах Турра, сывă та маттур ача ҫуттĕнчене килчĕ. Ывăла Григорий ят хутăмăр. Сакăр уйăх тултарнă хыҫҫăн ҫеҫ упăшка пепкене алă ҫине тытса курчĕ, икĕ эрнелĕх отпуска янă вăхăтра. Шел, пĕрле чухне вăхăт ытла та хăвăрт шăвать...

**– Юратнă ҫын аякра пулни, паллах, чуна хумхантарать, анчах та 3 ачана пĕччен пăхма та ҫăмăл мар. Ҫак самантри йывăрлăхсене эсĕ епле ҫĕнтерсе пыратăн?**

– Ҫăмăлах мар пулсан та, эпир пуҫа усса лармастпăр, ырă та ҫутă шухăшсем пирки ҫеҫ ĕмĕтленетпĕр, вăрҫă кĕҫ-вĕҫ пĕтессе шанатпăр.

Аттепе анне, кукамайпа асанне, тус-юлташсем ҫумра пулни тĕрлĕ йывăрлăхсене ҫĕнтерме пулăшать. Эпĕ хамăн мăшăрпа мухтанатăп, чĕререн юрататăп, чунтан киле таврăнасса кĕтетĕп.

**– Кăҫал эсĕ «Эпĕ – хĕрарăм» конкурса та «Кĕт мана» номинацире хутшăнтăн. Ку шухăш санăн мĕнле тата хăҫан ҫуралчĕ?**

– Килте ачасене пăхса ларнă хушăра тĕрлĕ мастер-классене ҫӳретĕп, конкурссене те час-часах хутшăнатăп. «Эпĕ – хĕрарăм» конкурса та хутшăнса пăхас терĕм. Унта ман видеороликшĕн 186 ҫын сасăланă, вĕсене пурне те тав сăмахĕ каласа хăварас килет. Эсир пулăшу пани, ыр сăмахсем калани мана ҫунат хушса, хавхалантарса тăчĕ. Ҫĕнтерӳҫĕ пулайманнишĕн пĕрре те пăшăрханмастăп. Тĕрлĕ ҫынсемпе паллашнишĕн, ҫĕнĕ юлташсем тупнишĕн чун-чĕререн савăнатăп.

**– Вулакансене мĕн каласа хăварăттăн?**

– Хаклă вулаканăмăрсем, сире тĕнчери мĕнпур ырлăха ҫеҫ сунатăп, юратнă мăшăрпа, ача-пăчапа ялан савăнса шăкăл-шăкăл пурăнмалла пултăрччĕ, мĕнпур ĕҫре Турă пулăшса пытăрччĕ сире. Вăрҫă часах пĕтессе кĕтетпĕр, чăваш салтакĕсем пурте чĕрĕ те сывă килĕсене таврăнасса шанатпăр. Юратăр, кĕтĕр, ĕненĕр!

**– Пысăк тав сана, Таня. Эпир сана малалла та ҫакăн пек ырă кăмăллă, ҫепĕҫ чунлă пулма сунатпăр. Мăшăру часах киле таврăнасса шанатпăр. Ялта сан пек ҫирĕп те шăнчăка ҫухатман хĕр пуррипе мухтанатпăр.**

Ксения ВОРОБЬЕВА

## Апрельтен ишеҫҫĕ, ҫулла «ылтăн» илеҫҫĕ




Кочкинсем ҫамрăк спортсменсемпе пĕрле.

**Маттур та пултарулллă! Сывă пурнăҫ йĕркин ҫав тери ҫывăх тусĕсем. Хăйсем спорта аталантараҫҫĕ ҫеҫ мар, ҫамрăксене те кирлĕ те пĕтĕм пурнăҫшăн пĕлтерĕшлĕ йăлана явăҫтараҫҫĕ. Сăмах Кӳлхĕрринче пурăнакан Кочкинсем пирки.**

Иринăпа Александр Кочкинсем ку тăрăхра тĕпленнĕренпе округра байдарка тата каноэ спорчĕ самаях аталанчĕ. Вĕсем – ҫак тĕсĕн Пĕтĕм Раҫҫейри федерацийĕн Чăваш енри обществăлла организацийĕн ертӳҫисем.

Унччен ҫемье Шупашкарта пурăннă. Ирина медицина факультетне пĕтерсен тĕп хулари медучреждение тимленĕ. Александр юрист тата педагог профессийĕсене алла илнĕ. Унччен иккĕшĕ те Шупашкарти спорт шкулĕнче тренерта тăрăшнă. Ачасене спортпа туслаштарнă ҫеҫ мар, хăйсем те тĕрлĕ ăмăртусенче – йĕлтĕрпе чупассипе, велоспортра, байдарка-каноэпе яланах пьедестал ҫине тăма тивĕҫнĕ.

Сакăр ҫул каялла вĕсем шыв ҫинчи спорт тĕсне яллă тăрăхра та аталантарас тенĕ. Темиҫе юханшыва тĕпчесен Кӳлхĕрри кӳлли ҫинче чарăннă. Хитре вырăн тыткăнланă вĕсене. Ҫитменнине, Ирина кӳршĕллĕ Хапăс ялĕнче ҫуралса ӳснĕ.

Кочкинсем – тĕрлĕ шайри сумлă ăмăртусен ҫĕнтерӳҫисем. Раҫҫейре пĕрре мар мала тухнă. Александр ҫавăн пекех ветерансем хушшинче тĕнче тата Европа первенствинче те призерсен йышне кĕме пултарнă.

Кăҫал, ак, июньте мăшăр Волжск хулинче SUP-хăмасемпе ывăсса ярăнассипе иртнĕ чемпионатра ҫĕнтерӳҫĕсем пулса тăнă.

Пĕлетпĕр ĕнтĕ, тăрăшмасăр нимĕнле ҫитĕнӳ те пулмасть. Кочкинсем ҫулталăк тăршшĕпе ӳт-пĕве писĕхтереҫҫĕ. Хĕлле юр тăрăх ҫарран утаҫҫĕ. Апрельтех шывра ишеҫҫĕ. Велосипедпа ярăнса чăтăмлăха ҫирĕплетеҫҫĕ.

Гребля сезонне вара вĕсем апрельтех тытăнаҫҫĕ. Ҫакă ҫулла «ылтăна» тивĕҫме пулăшать те ĕнтĕ.

Шыв лăпкă чухне тренировкăсем пĕвере иртеҫҫĕ. Ҫил вăйлансан ҫыранри упражненисенче писĕхеҫҫĕ.

Хĕлле вара мăшăр йĕлтĕрсем ҫине куҫать. Александрпа Ирина округра иртекен «Раҫҫей йĕлтĕр йĕрĕ» массăллă ăмăртусенче те кашнинчех ҫĕнтерӳҫĕсен йышĕнче. Округ чысне ҫӳллĕ турнирсенче ăнăҫлă хӳтĕлеҫҫĕ. Александр, ак, кăҫал Регионсем хушшинчи кубокра ылтăн медале тивĕҫнĕ. Чăваш ен чемпионатĕнче бронза призер пулса тăнă.

Кочкинсем тăрăшнипех округри ачасем те SUP-хăмасемпе ывăх туслашрĕҫ. Республика тулашĕнчи ăмăртусене те хутшăнма май пулчĕ вĕсен.

Анчахрах ак вĕсем пуҫарнипе Кӳлхĕрри кӳлли ҫинче триатлон енĕпе Чăваш ен чемпионачĕ иртрĕ. Унта тĕрлĕ округри вун-вун ҫамрăк тупăшрĕ.

Иринăпа Александр Кочкинсен ырă шухăш та пур – вĕсем «Рассвет» спортшкулĕн никĕсĕ ҫинче гребля енĕпе секци уҫасшăн. Питех те лайăх пулмалла!

Спорт ҫемйи – тăван ачисемшĕн те тĕслĕх. Вĕсем те сывă пурнăҫ йĕркине туслашса ӳсеҫҫĕ.

Чăннипех те мухтава тивĕҫлĕ ҫемье!

Светлана ЧИКМЯКОВА



## Ҫулсерен тӳлев уйăрĕҫ

**Патшалăх Думи ĕҫле-кен, икĕ е ытларах ачаллă ашшĕ-амăшне ҫулсерен тӳлев уйăрасси пирки саккун проектне пĕрремĕш вулавпа йышăннă.**

Ăна, палăртнă тăрăх, ҫемьере кашнине тивекен вăтам тупăш регионти пурăнма кирлĕ 1,5 минимумран ирттменнисем тивĕҫмелле. Вĕсем Раҫҫей гражданĕсем пулмалла, пĕрмаях ун территорийĕнче пурăнмалла.

Тӳлев виҫине шутламалли йĕркене те палăртнă. Вăл унчченхи ҫулшăн уйрăм ҫынсен тупăшĕнчен тӳленĕ налук тата ҫав тупăшранах 6 процент ставкăпа шутланă налук хушшинчи сумма пулĕ.

Гражданинăн ку тӳлеве илме заявление Раҫҫей Социаллă фончĕн территориri органне пама юрать. Ăна НДФЛ тӳленĕ ҫул хыҫҫăнхи тепĕр ҫул май уйăхĕн 1-мĕшĕнчен октябрĕн 1-мĕшĕччен ҫырмалла.

Хамăр инф.